25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
26
ВЫРСАРНИКУН
173(6108) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Пурнĕ те перекетлесси — вăрçă вăхăтĕнчи закон

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç совет халăхĕ туса пыракан аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн промышленность хăйĕн ĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетрĕ. Мирлĕ вăхăтри вырсемпе йăласене пăрахса, фабрикăсемпе заводсен, артельсемпе мастерскойсен коллективĕсем фронта паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен ытларах продукци парассишĕн ĕçлеççĕ, Сталин юлташ лартнă задачăна пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура предприятисем хăйсен технологи процесне лайăхлатаççĕ, рационализаторла майсемпе усă кураççĕ, шалти резервсемпе ресурссене мобилизацилеççĕ. Çапла туни ĕçре пысăк усă кӳрет, продукци ытларах пама, плана ăнăçлăн тултарма пулăшать. Анчах фронта мĕн кирлине парса тăрас ĕçе вăйлатмалли майсем татах та пур. Сăмах перекетлĕх çинчен пырать.

Пур чух та, пур çĕрте те тата пурне те перекетлемелле — çакăн пек пулмалла кашни совет предприятийĕн, кашни совет ĕççыннийĕн ĕмĕчĕ. Совет влаçĕ пулнăранпах эпир хуçасăрлăхпа сапаланчăка хирĕç кĕрешетпĕр, сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче типтерлĕ те перекетлĕ пурăнма вĕрентĕмĕр. Сталин юлташ пире кирек хăçан та типтерлĕ пулма, кашни пус укçана, кашни килограмм метала, топливăна перекетлеме хушать. Пирĕн предприятисенче инструментсене, чĕртавара, материалсене, топливăна, электроэнергие хуçалла тыткалас ыйтăва партин 18-мĕш конференцийĕ çирĕппĕн лартрĕ. Халĕ, тăшман çĕршывăн пурнăç центрĕсем патнелле кармашнă чухне, перекетлĕх ыйтăвĕ никăçанхинчен çивĕччĕн тухса тăрать. Вăраха кайса пыракан вăрçă пурне те перекетлеме хушать, мĕншĕн тесен перекетлĕх Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине ытларах пама май парать, пирĕн çĕнтерĕве çывхартать. Анчах çакăн çинчен пирĕн республикăри чылай предприятисем, вăл шутрах малта пыракан предприятисем те, час-часах манаççĕ. Канашри вагонсем юсакан тата Улатăрти паровозсем юсакан заводсенче хăшпĕр уйăхсенче топливăна нормăран ытлашши тăкаклани пулкалать, рабочисем хăйсен ĕç хатĕрĕсене типтерлĕ тытма вĕренсе çитни сукрах-ха. Апатçимĕç тата вырăнти промышленность системинчи предприятисенче хăшпĕр чух чĕртаварсене ахалех сая яраççĕ, типтерлĕхшĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ.

Кашни предприятире — пысăк заводра та, пĕчĕк мастерскойра та — перекетлĕх çине хыттăн çаврăнса пăхмалла. Руководителĕн, инженерăн, рабочин хăш станок çинче, мĕнле операцире материалсем усăсăр пĕтнине курса тăмалла, пĕр çĕрте юлнă материалсене тепĕр çĕрте усă курмалла тăвасси пирки шутласа пăхмалла. Хăш завод директорĕ, цех начальникĕ, смена мастерĕ перекетлемелли майсене шыраса тупса вĕсемпе ĕçре усă курать — çавă хăйне чăн-чăн руководитель тесе шутлама пултарать. Перекетлĕхшĕн сăмахпа мар, ĕçпе кĕрешнине эпир икĕ Хĕрлĕ ялав илнĕ заводăн чылай цехĕсенче курма пултаратпăр. Кунта продукцисене туса кăларнă чух хаклă тата тĕслĕ металсене хурçăпа е ытти металсемпе улăштараççĕ, заводăн шалти ресурсĕсемпе усă кураççĕ, инструментсене ялана юсавлă тытаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах топливăна перекетлесе хăварасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кăмрăк, нефть, торф тата вутă — вĕсем фронтри тупăсемпе, снарядсемпе, винтовкăсемпе, патронсемпе пĕрех. Вĕсем çар промышленноçĕ валли кирлĕрен те кирлĕ çимĕç пулса тăраççĕ. Çавăнпа та кашни руководитель, кашни специалист, рабочи вĕсене типтерлĕ тыткалама, вĕсене перекетлесе хăварма тивĕçлĕ.

Перекетлĕхшĕн промышленноçпа транспортра анчах мар, ялхуçалăхĕнче те кĕрешмелле. Машинно-тракторнăй станцисемпе мастерскойсенче, колхозсенче нефтьпа, краççынпа, торфпа, вутăпа чылай чухне мĕнле май килнĕ çапла усă кураççĕ. Халĕ тырпулсене пухса кĕртме тухас вăхăт çывхарса килет. Уйри ĕçсенче çунтармалли япаласене перекетлемелли пур майсемпе те усă курас пулать.

Пысăккăн çеç мар, пĕчĕккĕн те перекетлемелле. Кăм халĕ çунтармалли япаласене тăккалать, инструментсене ватать, путăхтарать, — çавă государствăна хирĕçле ĕç тăвать, пирĕн вăя чакарать.

Перекетлĕхшĕн кĕрешесси кашни предприятин, кашни совет çыннин вăрçă вăхăтĕнчи иксĕлми законĕ пулмалла, мĕншĕн тесен унпа фронт интересĕсем тачă çыхăнса тăраççĕ. Пурлăхсене, чĕртаварсене, материалсене, çунтармалли япаласене, электроэнергие перекетлени — Хĕрлĕ Çар валли тата ытларах хĕçпăшалсемпе боеприпассем [illegible]

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Воронеж** районĕнче, çавăн пекех тата **Цымлянская, Новочеркасск, Ростов** районĕсенче противника хирĕç хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче палăрмалла улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 90 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 270 автомашинине, горючи тултарнă 14 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне тата горючи хунă 2 склада сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 4 дивизионне пусарса лартнă, противникăн пехотине 5 батальона çити тата утлă çарăн пĕр эскадронне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем противникăн войскисене пыра-пыра çапнă. Гитлеровецсем çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртсе яраççĕ, контратакăсем тăваççĕ. Пĕр участокра нимĕçсен инçери тылĕнчен тин çеç килсе çитнĕ пехотнăй полка аркатса тăкнă. Çав полкран пĕр ротăран ытла юлман. Унсăр пуçне пирĕн войскăсем 10 танкпа бронемашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсен пĕр ушкăнĕ, противника хĕссе пырса, Дон шывĕ урлă каçнă та çав шывăн хĕвеланăç хĕрринче çирĕпленсе ларнă. Пирĕн авиаци нимĕçсен позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тӳрĕ ӳкнипе противникăн пĕр питĕ кирлĕ кĕперĕ çĕмĕрĕлнĕ. Нимĕçсен 18 танкне, 34 автомашинине, 6 зенитнăй орудипе тата груз тиенĕ 26 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ростов районĕнче противникăн танкĕсен пысăк чăçĕсем хула патне татса кĕме тăрăшаççĕ. Вăйлă та юнлă çапăçусем пыраççĕ. Пĕр участокра артиллеристсемпе бронебойщиксем противникăн танкĕсен 6 атакине сирсе янă, нимĕçсен 38 танкне пĕтерсе тăкнă. Сирĕплетнĕ районсем патне пымалли вырăнсенче гитлеровецсен пиншер виллисем йăваланса выртаççĕ. Анчах та çав сухатусене пăхмасăрах, противник çапăçăва çĕнĕ те çĕнĕ вăйсем кĕртсе пырать.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем Донăн кăнтăр хĕррине каçма пĕтĕм вăйран тăрăшаççĕ. Вĕсем унта питех те пысăк сухатусем тӳсеççĕ. Противникăн пĕр участокра кăна пĕр талăк хушшинче 1.500 салтакпа офицер ытла вилнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсем, авиаци тата артиллери вăйлăн персе тăрса кӳтĕленипе юханшыв урлă каçма пултарнă. Пирĕн чăçсем, хирĕç пырса çапса, нимĕçсен пехотин малалла татса кĕнĕ полкне пĕтерсе тăкнă. Совет воинĕсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç хăйсене шеллемесĕр кĕрешеççĕ, вĕсем — вилетпĕр, анчах та каялла чакмастпăр! тенĕ лозунгпа çапăçаççĕ.

* * *

Брянск фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен 20 танкне ытла персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пирĕн чăçсем малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен Г. юлташ ертсе пыракан ушкăнĕ нимĕçсен бази çине пырса тапăннă. Партизансем боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата продовольствипе тĕрлĕ çар пурлăхĕсен склачĕсене çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 102-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 233-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак — поляк Юрий Б. çапла каласа панă: «1939 çулччен эпĕ полякcен халăх шкулĕнче учитель пулса ĕçлерĕм. Нимĕç оккупанчĕсем Польшăна тытса илсен, вĕсем поляксен мĕнпур шкулĕсене пĕтерсе лартрĕç, хупса хучĕç. Шкул çуртĕсенче казармăсемпе госпитальсем турĕ. Кăçалхи çуркунне мана Германи çарне мобилизацилерĕç. Гитлерла салтакăн тумтирне, пĕтĕм тĕнче умĕнче намăса тухнă çарăн тумтирне, тăхăнма мана питех те йывăр, хурлăхлă пулчĕ. Гитлершăн ирĕклĕн е ирĕксĕртен ĕçлекен поляк вăл хăйне пăвакан мăйкăча тата хытăрах туртса хунине эпĕ питĕ лайăх пĕлсе тăратăп. Çавăнпа та эпĕ май килсенех Хĕрлĕ Çар енне каçатăп тесе шухăшласа хутăм.

Тăватă кун хушши пынă çапăçусенче ротăра вилсе, аманса тата тыткăна лексе 80 çын çухалнă. Эпир окопра тăнă чухне кĕтмен çĕртен вырăс танкĕсем курăнса кайрĕç, çав танксем хыççăн пехота пыратчĕ. Пирĕн салтаксем тарса пĕтрĕç, эпĕ окопран тухрăм та тыткăна парăнтăм».

* * *

Брянск фрончĕн линийĕ урлă каçса килнĕ совет гражданĕсем гитлерла мерзавецсем калама çук тискер ĕç туни çинчен каласа панă. Нимĕçсем, засадăран тухса, красноармеец Густов юлташа тыткăна илнĕ. Бандитсем совет войскисем ăçта вырнаçса тăнине пĕлес тесе çав красноармееца тискеррĕн асаплантарнă. Пирĕн боец пĕр сăмах та каламан. Урса кайнă гитлеровецсем вара Густов юлташа икĕ танк çумне çыхса хунă та ăна икĕ пая татса пăрахнă.

* * *

Германире çупа маргарин вырăнне карточкăсемпе çĕнĕ эрзац-«çу» пама тытăннă, ăна сĕрмелли материалтан тунă. Çав эрзаца çинипе Дортмундра пĕр эрне хушшинчех 121 çын йывăр чирленĕ.

Июлĕн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче, çавăн пекех тата **Цымлянская, Новочеркасск, Ростов** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă. Пирĕн авиаци, çĕр çинчи чăçсемпе çыхăнса кĕрешсе, противникăн çапăçу йĕркисене, унăн тылне тата çыхăнăвĕсене пĕр тăтăш пыра-пыра çапнă. Кросовский юлташ командир пулса тăракан чăçри летчиксем 5 кун хушшинче нимĕçсен вуншар танкне, 300 автомашинине ытла, 6 бензоцистернине, полевой тата зенитнăй 40 орудине пĕтерсе тăкнă, 9 кĕпере çĕмĕрнĕ тата противникăн пехотине 4 батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Кĕçĕн лейтенант Салмаковăн батарейинчи артиллеристсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Ростов районĕнче противникăн танкĕсемпе мотопехотин йышлăрах вăйĕсене хирĕç йывăр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем пĕр участокра пирĕн войскăсем вырăнаçса тăнă вырăна татса кĕме пултарнă. Хаяр çапăçура, час-часах штык вĕççĕн çапăçса, пирĕн боецсем гитлеровецсене 2.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 18 танкне çунтарса янă, хăйсен вăйĕпе çӳрекен 3 орудине тата 14 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр рубежа хӳтĕлекенсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçса паттăрсен вилĕмĕпе вилсе пĕтсен çеç нимĕçсем кăштах малалла куçма пултарнă. Çав участокра нимĕçсен çухатăвĕсем пирĕннинчен темиçе хут пысăкрах.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем Дон шывĕ урлă каçмалли кĕперсемпĕн оборонăллă çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем кирек мĕн пулсан та çав шывăн кăнтăр хĕррине каçма тăрăшаççĕ, пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе вĕсем унта питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Пĕр участокра пирĕн артиллеристсем сывлăш тултарса тунă вуншар лодкăсемпе сулăсене путарнă. Нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски чăçри артиллеристсем противникăн танкĕсемпе пехоти пухăнса тănă вырăна сасартăк вăйлăн пеме тытăннă. Нимĕçсен 10 танкне пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсене пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Пирĕн чăçăн боецĕсем, артиллерипе минометсенчен вăйлăн персе тăрса пулăшнипе, нимĕçсен позицийĕсене атакăланă. Малта пирĕн танксем пынă, вĕсем пехота валли çул уçса, противникăн огневой точкисене пĕтерсе пынă. Çапăçу темиçе сехет пынă. Командовани лартнă задачăна каç пуласпа вара пурнăçа кĕртнĕ. Тăшманăн опорнăй пунктне тытса илнĕ. 16 дзота çĕмĕрнĕ, трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Çав çапăçура противник пысăк çухатусем тӳснĕ. Тыткăна илнĕ ефрейтор Генрих Райнганц каласа панă тăрăх, нимĕçсен батальонĕнчен чĕрĕ тăрса юлнисем 15 çынтан ытла мар.

* * *

Калинин фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пĕр участокра противникăн пехоти пирĕн траншейăсене кĕрсе кайма пултарнă. Штык вĕççĕн тăрса çапăçса, гитлеровецсене нумайĕшне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн окопсем патĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 150 вилли ытла выртса юлнă. Тепĕр участокра нимĕçсем пирĕн икĕ подразделени хушшинчи вырăнта наступлени пуçласа янă. Пулеметсемпе минометсенчен вăйлăн персе тăрса, гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Çав участокрах кĕçĕн лейтенант Посохин, станковăй пулеметран персе, нимĕçсен пĕр самолетне ӳкернĕ. Çав самолет çинче паха документсем хунă портфель тупнă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансен Е. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ пĕр уйăх хушши çапăçса нимĕçсен 200 ытла салтакĕпе офицерне тата венгерсен 350 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Партизансем тугунçул çинчи 10 эшелона ӳпĕнтерсе янă, крушени вăхăтĕнче çĕршер гитлеровец вилнĕ тата техника нумай пĕтнĕ. Совет патриочĕсем çав вăхăт хушшинчех 2 оруди, 14 миномет, 9 ручной тата 4 станковăй пулемет, боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Партизансен Д. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ, минăсем хурса, противникăн пысăк хăвăртлăхпа пыракан эшелонне сирпĕнтерсе янă. Сынсем ларса пынă 4 вагон тата нимĕç оккупанчĕсен çар техникине турттарса пынă 38 платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

III-мĕш Интернационал ячĕпе тăракан рудник, оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕскер, июлĕн 20 кунĕ хушшинче çак уйăхри плана 11 процент ирттерсе тултарнă.

Нимĕçсен контратакисене сирсе янă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 24-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Оборонăн паха пунктне çухатсан, нимĕç войскисем ăна каялла тавăрас тесе çак юлашки кунсенче питех те хаяр контратакăсем тунă. Çав атакăсенчен пĕринче гитлеровецсем çапăçăва 40 танк кĕртсе янă. Артиллерипе бронебойщиксем кăç пулнă çĕре нимĕçсен йывăр тата çăмăл танкĕсене 15 танк ытла пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем малалла каяйман.

Юрковăн пулемет расчетĕнчи пулеметчиксем нихăçан манми паттăр ĕç тунă. Тăшманăн блиндажне йышăнса илсе, вĕсем темиçе вуншар фашиста вĕлерне, лентăра пĕр патрон юлмичченех çапăçнă. Çав блиндажа нимĕçсен пысăк ушкăнĕ çаврса илсен те геройсем пĕр утăм та каялла чакман. Вĕсем çав блиндажа сирпĕнтерсе янă, хăйсемпе пĕрле темиçе гитлеровеца çĕре пытарнă.

Пирĕн самолетсем Кенигсберг çине çĕнĕрен вĕçсе кайса тапăнни

Июлĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пĕр ушкăнĕ йывăр метеорологиллĕ условисенче Кенигсбергăн çарпа промышленность объекчĕсем çине тепĕр хут бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнипе хулара 12 тĕлте пушарсем тухнă тата 5 хутчен вăйлă взрыв пулнă.

Сывлăшра финсен авиацине хирĕç çапăçни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 24-мĕш. (ТАСС). Юлашки вăхăтра пирĕн Н-ски чăçри летчиксем финсен авиацине пысăк çухатусем тӳстернĕ. Алабинпа Бондаренко истребительсем тăшманăн вунă самолетне персе ӳкернĕ, вĕсенчен пĕрне—таран туса персе ӳкернĕ. Темиçе кун каялла 6 совет истребителĕ тăшманăн 8 самолетне тĕл пулнă. Ремизов капитан тăшманăн пĕр самолетне персе ӳкернĕ те, ыттисем вара васкасах каялла çаврăнса кайнă. Тепĕр çапăçура Станкевичпа Маслов истребительсем финсен самолечĕсен пĕр ушкăнне хирĕç çапăçма тытăнса, вăл самолетсенчен иккĕшне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн улттăмĕш самолетне эскадрилья комиссарĕ Поляков персе ӳкернĕ. Çав кунхех Поляков ертсе пыракан звено тăшманăн тата тепĕр самолетне пĕтерсе тăкнă. Орденоносец Напляхтович икĕ «Хейнкелĕн» атакисене питĕ ăстан сирсе пăрахнă. Юлашки хутĕнчи атакăра пĕр «Хейнкеле» персе ӳкернĕ. Сывлăшри снайпер стрелок-радист Карелов июнь уйăхĕнче 3 самолета персе ӳкернĕ.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче фронтăн çав участокĕнче финсен 40 самолета яхăн пĕтнĕ.

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене республикăри ĕççыннисем пысăк çĕкленӳпе сырăнса илеççĕ

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене малтанхи кун вырнаçтарнин итогĕсем

Правительство укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене кăларни çинчен радиопа пĕлтернĕ хыççăнах республикăри пур хуласемпе районсенче те вĕсене вырнаçтарас ĕç пуçланса кайрĕ. Рабочисем, колхозниксем тата служащисем, çĕнĕ лотерея билечĕсене илме пысăк хастарлăхпа çырăнса, хăйсен ĕç укçин пĕр пайне фронта пулăшнă çĕре параççĕ.

Республикăн 21 районĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, унти колхозниксемпе единсличниксем хушшинче лотерея билечĕсене малтанхи кун 4.577.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă, вăл шутран 2.263.000 тенкĕ укçа пухнă.

Рабочисемпе служащисем хушшинче лотерея билечĕсене 1.133.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 85.000 тенкĕ пухнă.

Уйрăм районсенчен çак ĕçе Чкаловски, Калинински тата Хĕрлĕ Чутай районĕсем лайăх организациленĕ. Чкаловски районра 300.000 тенкĕлĕх сарса, укçине 250.000 тенкĕ пухнă, Калинински районра 253.000 тенкĕлĕх, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 200.000 тенкĕлĕх сарса, укçине те çавăн чухлех пухса панă.

Анчах Октябрьски, Советски, Шупашкар, Тăвай, Комсомольски тата Шăхасан районĕсем лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕçе кирлĕ пек тытăнман-ха. Унти финанс оргăнĕсемпе перекет кассисен работникĕсем уйрăм колхозсемпе учреждениесенче çак ĕç мĕнле пуçланни çинчен пĕлмеççĕ. Асăннă районсенчи партипе совет оргăнĕсен лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕçре малтанхи кун пулнă ситменлĕхсене пĕтерме тăрăшас пулать.

Пысăк активлăхпа çырăнаççĕ

КУКЕÇ. (**Телефонпа**). Районра укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене вырнаçтарас ĕç хĕрӳллĕн пырать. «Кормилец» колхоз членĕсем лотерея билечĕсене илме 9 пин тенкĕлĕх çырăннă. Колхозниксем çав суммăна çийĕнчех тӳлесе татнă. Колхоз председателĕ Евдокимов юлташ 300 тенкĕлĕх çырăннă.

Лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕç «Луга» колхозра та ăнăçлă иртнĕ. Кунта пĕр кун хушшинче 5 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă.

Районри çыхăну конторин коллективĕ лотерея билечĕсене уйрăмах пысăк активлăхпа çырăннă. Коллектив çырăнпин сумми уйăхри ĕçукçи фончĕн 50 проценчĕ чухлĕ шутланать. Çав шутран çуррине укçан пухса панă.

В. КАРАУШЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Колхозниксен пулăшăвĕ

ÇĔМĔРЛЕ, июлĕн 25-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене районра 155 пин тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран 40 пин тенкине укçан пухса панă.

Çĕнĕ лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕç колхозсенче лайăх пырать. Турханти «Комбинат» колхозра пĕр кун хушшинче 27.520 тенкĕлĕх вырнаçтарнă, 13.450 тенкĕ укçан пухса панă. Ку колхозри Е. Сиванов юлташ 400 тенкĕлĕх, М. Казенов, В. Ванюков, П. Сиваков юлташсем 200-шер тенкĕлĕх çырăннă.

Лотерея билечĕсене «Подборное» колхозра 4.200 тенкĕлĕх, «Ударник» колхозра 5.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Икĕ колхозĕнче те 4-шар пин тенкĕ укçа пухнă.

Укçине те çийĕнчех тӳлеççĕ

ИШЛЕЙ, июлĕн 25-мĕш. (**Телефонпа**). Иккĕмĕш лотерея билечĕсене кăларни çинчен радиопа пĕлтерсенех, ялсенче вĕсене вырнаçтарас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Очăкасси ялсоветĕнчи колхозниксем çĕнĕ лотерея билечĕсене малтанхи кунах 15.780 тенкĕлĕх çырăннă. Ялти активистсен примерне курса, колхозниксем çийĕнчех укçине те тӳлеççĕ. «Красное Оточево» колхоз председателĕ Д. Калашников юлташ 500 тенкĕлĕх çырăнса укçине те парса татрĕ. Ун хыççăн Т. Семенов, С. Сергеев колхозниксем 200-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине те хыврĕç.

Çавăн пекех «Торинино» колхоз председателĕ Н. Тимофеев, «Новая сила» колхоз председателĕ П. Матвеев, 60 çулти колхозник А. Воронов юлташсем 300-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине парса татнă.

Çапла вара, Очăкасси ялсоветĕнче лотерея билечĕсене çырăнакансем кашниех укçине çийĕнчех хывса пынă.

Çĕнĕ лотерейăн билечĕсене сарас ĕçе Сыпайкасси ялсоветĕнче те лайăх иртернĕ. Кунти «Труд» колхозра 2.400 тенкĕлĕх, «Ырăш» колхозра 1.900 тенкĕлĕх, Свердлов ячĕпе тăракан колхозра 2.500 тенкĕлĕх сарнă. «Труд» колхоз председателĕ Шишкин юлташ 160 тенкĕлĕх, колхозниксем М. Ячникова, Ф. Яшкова, С. Ядров юлташсем кашниех 100-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине савăнтах хывнă.

П. ЛУКИН.

20 процент чухлĕ çырăнчĕç

Шупашкарти ача-пăча больницинче ĕçлекенсем лотерея билечĕсене хăйсен уйăхри ĕçукçи фончĕн 20 проценчĕ чухлĕ çырăнчĕç. Çак ĕçре уйрăмах Н. Александрова, А. Миронова, А. Логунова, А. Смирнова, М. Антонова, П. Паргунькина санитаркăсем активлăх кăтартрĕç.

ФАЯЛЬСКАЯ.

ССР Союзĕн Наркомземĕнче

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн условийĕсем тăрăх, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Бенедиктов юлташ ялхуçалăхĕнче отлично ĕçленĕшĕн Чăваш республикинчи чылай трактористка-стахановкăсене «Социализмлă ялхуçалăхĕн отличникĕ» значокпа наградăланă.

Наградăна илме çак трактористкăсем тивĕçлĕ пулнă:

Елена Кудрявцева—Шупашкар МТС-ĕн трактористки, çуракинчи ĕç планне 242 процент тултарнă, 22 процент горючи перекетлесе хăварнă.

Дария Илюшкина — Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн трактористки, çуракинчи ĕç планне 259,8 процент тултарнă, 24,8 процент горючи перекетленĕ.

Ольга Быкова — Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн трактористки, çуракинчи ĕç планне 207,1 процент тултарнă, 14,6 процент горючи перекетленĕ.

Матрена Богатнаева — Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн трактористки, çуракинчи ĕç планне 252,5 процент пурнăçланă, 7,2 процент горючи перекетленĕ.

Ефросиния Иванова — Канаш МТС-ĕн трактористки, çуракинчи ĕç планне 188,1 процент тултарнă, 11,1 процент горючи перекетленĕ.

Екатерина Русакова — Вăрмар МТС-ĕн трактористки, çуракинчи ĕç планне 232 процент тултарнă, 8,5 процент горючи перекетленĕ.

Таисия Григорьева — Вăрмар МТС-ĕн трактористки, çуракинчи ĕç планне 263 процент тултарнă, 4 процент горючи перекетлесе хăварнă.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Çуракинче лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлесе мала тухнă хĕрарăм-трактористкăсен бригадисене тата уйрăм трактористкăсене Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Политсекторĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата мухтав грамотисемпе укçан премисем памалла тунă.

Вăрмар МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 2-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Данилов юлташ) хăйĕн çуракинчи ĕçсен планне 152 процент тултарнă, 275 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Бригада хăйĕн ĕçĕпе республикăри чи малти вырăна тухнă. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Политсектор çак бригадăна хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă, уйрăмах лайăх ĕçленĕ трактористкăсене премилеме 1.000 тенкĕ укçа уйăрса панă. Кувакино МТС-ĕнчи трактористкăсен 4-мĕш номерлĕ бригади (бригадирĕ Балденкова юлташ) çурхи ĕçсен планне 132 процент тултарнă, 687 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çак бригада çурхи ĕçсенче хĕрарăмсен тракторнăй бригадисем хушшинче иккĕмĕш вырăн йышăннă, ăна ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Политсектор мухтав грамотине тата бригадăри чи лайăх трактористкăсене премилеме 1.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Республикăри чи лайăх трактористкăсене, çуракинче лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕскерсене, Т. Григорьева (Вăрмар МТС-ĕ), М. Богатнаева (Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ), А. Терентьева (Йĕпреç МТС-ĕ) тата А. Иванова (Тăвай МТС-ĕ) юлташсене кашнинех Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Политсекторĕн мухтав грамотине панă, 250-шар тенкĕ укçа памалла тунă.

„Тырпула пухса кĕртесси вăл—сезонра тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăма юратмасть. Вăхăтра пухса илтĕн—туянтăн, кая юлтăн—çухатрăн" (И. Сталин).

36 колхоз уборкăна тухма хатĕр

ИЕПРЕÇ, июлĕн [illegible]-мĕш. (Телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата государствăна тырă парасси çинчен» йышăннă постановление ăнлантарса 6 çĕрте колхоз председателĕсемпе бригадирĕсен канашлăвĕсене туса ирттертĕмĕр. Çак канашлусенче районри колхозсен уборкăна хатĕрленес ĕçри çитменлĕхĕсем те палăрчĕç.

Паянхи куна районри 48 колхозран 36 колхозĕ уборкăна тухма хатĕрленсе çитнĕ. МТС хăйĕн комбайнĕсене пурне те юсаса ĕçе тухма хатĕрлерĕ. Районра 63 жнейка юсанă. Жнейкăсемпе косилкăсене юсас ĕçре юлашки вăхăтра колхозсене машинно-тракторнăй станци вăйлăн пулăшма тытăнчĕ. Вĕсен пулăшăвĕпе район пур жнейкăсене те августăн 1-мĕшчен юсаса çитерме тăрăшать.

Уборкăна хатĕрленес ĕçре уйрăмах «Красный водник», «Красный металлист» колхозсем юлса пыраççĕ. Çавăн пекех кĕрепллеллĕ çавасем тăвас ĕç те кирлĕ хăвăртлăхпа пулса пымасть-ха. «Коммунар» колхоз тырă вырмалли çавасем тăвас тĕлĕшпе пуçарулăх кăтартрĕ. Иванов колхозника правлени кĕрепллеллĕ çавасем хатĕрлеме хушнă. Иванов юлташ тырра çулнă вăхăтра тытса пырса майлаштарса пăрахакан кĕрепллесене йывăçран мар, пралукран тума тытăннă. Пралукран тунă кĕрепле çăмăлрах тата çирĕпрех. Çавăн пек кĕрепллесем Иванов юлташ 37 тунă. Вĕсемпе утă çулма пĕлекен кашни колхозницăх аванах тырă вырма пултарать.

«Коммунар» колхозăн пуçарăвне ытти колхозсен те шута илмелле. Уборкăна хатĕрленес ĕçе тĕпренех васкатмалла. Итемсене тасатса, машинăсене ĕçе вырнаçтарса тухмалла, силос хывас ĕçе вĕçлеме тăрăшмалла.

Партипе правительство 1942 çулти обязательствăсен шучĕпе иртнĕ çулти тырра пама ирĕк пачĕç. Çакăнпа усă курса государствăна тырă парас ĕçе халĕ ытларах тумалла.

Ф. АРТЕМЬЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Уборкăна тухма тĕплĕн хатĕрленеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кăçалхи тырпул пĕлтĕрхинчен вăйларах пуласси курăнсах тăрать. Вĕри ĕç вăхăчĕ пуçланасси нумай юлмарĕ. Вăйлă тырпула пухса кĕртме юсавлă машинăсем, тĕреклĕ те çирĕп инвентарь кирлĕ.

Районри малта пыракан колхозсем уборкăна пур енчен те хатĕрленсе çитрĕç. Акă, Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Шипов юлташ) тырпулсене пуçтарса кĕртме кирлĕ машинăсемпе инвентарьсене юсанă, вĕсемпе ĕçлеме уйрăм колхозниксемпе колхозницăсене çирĕплетнĕ, складсене тасатса хунă, витнĕ итемсене типтерленĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн тата партипе правительство колхозниксем ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен йышăннă постановление ăнлантарса панă хыççăн колхозниксен ĕç дисциплини çирĕпленчĕ. Халĕ кашни колхозник куллен тăрăшса, пĕтĕм вăйпа ĕçлет.

— Тырпула пĕр тăккалемасăр тата кĕске срокра пуçтарса кĕртсе государствăна срокчен паха тырă паратпăр, — тет колхоз председателĕ В. К. Шипов юлташ.

Колхоз 1942 çулти обязательство шучĕпе государствăна 101 центнер тырă, аш-какай, çу, çăмарта чылай панă.

Çичĕпÿртри Чапаев ячĕпе тăракан колхозра та ялхуçалăх машинисене уборкăна хатĕрленĕ, халĕ складсене тасатас, дезинфекцилес ĕç пырать.

Кивĕ Тутайкассинчи «Красный Октябрь» колхоз членĕсем гектартан 100-шер пăт тĕштырă илессишĕн кĕрешеççĕ. Халĕ колхоз 2 жнейка, 2 молотилка, 4 веялка юсаса ĕçе юрăхлă туса хатĕрлерĕ. Кăçал тырпула пухса кĕртнĕ çĕрте çавапа та усă курма лекет. Çавăнпа та ĕнтĕ 245 çава, 250 лапатка, 185 çурла тата кĕрепле, пăпăрсем хатĕрлесе хунă.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçласа пырать. Паянхи куна аш-какай памалли плана тултарнă, 254 килограмм çу, 3.587 çăмарта, 17 центнер утă панă.

— Кашни гектартан 120 пăтран кая мар тĕштырă пухса кĕртме пулатпăр, — терĕç Уй Пилемçĕрри «Опыт» колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса. Тулăх тырпула пухса кĕртме колхоз халь хĕрÿллĕн хатĕрленет, ĕçри кашни пĕчĕк детале шута илсе пырать, майлаштарать. Колхозниксем тырăсене 13 кунта пуçтарса кĕртме сăмах параççĕ.

А. РАЗИН.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнман

КАЛИНИНО. Районри чылай колхозсем, пысăк тухăçлă тырпулшăн, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса куллен хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ, çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. [illegible] Чăрăш Хирлесри «Радио» колхозĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнасшăн çаплах çук. [illegible] Колхоз председателĕ М. Антонов [illegible] секретарĕ А. Яковлев юлташсем [illegible] Çавна пула ĕнтĕ колхоз производство [illegible]

Уборка вăхăчĕ çывхарса килет. Анчах ку колхозри руководительсем ăна туймаççĕ-ха. Колхозăн виçĕ жнейка, вĕсенчен пĕри те юсавлă мар. Çурласемпе кĕрепллеллĕ çавасене те хатĕр[illegible]

Выльăх-чĕрлĕхсен [illegible] колхозăн 12 ферма [illegible] 6 ĕне çеç, 40 сурăх пулмалла, халĕ 30 сурăх çеç, [illegible] Çамрăк выльăх-чĕрлĕхсене контрактацилес [illegible] Партин райкомĕ [illegible] кирлĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Мобилизациленĕ сынсене ĕçе организованно ярар

Июлĕн 17-мĕшĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕ хуласенчи [illegible] государствăна коопераци тата общественнăй учрежденийĕсенче служащисен пĕр пайне тырпулсене пухса кĕртес ĕçре тума колхозсене, совхозсене тата МТС-сене [illegible] Ялхуçалăх ĕçлеме мобилизациленĕ [illegible] тырпулсене пухса кĕртес [illegible] VI—X-мĕш классенчи [illegible]

Районри советсен тата хула [illegible] совхозсене тата МТС-сене организованно ямалла. Совхозсемпе МТС-сен директорĕсен, колхоз правленийĕсен председателĕсен [illegible] СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1942 çулти апрелĕн 13-мĕшĕнче «Совхозсенчи, колхозсенчи тата МТС-сенчи [illegible]» [illegible]

Калас пулать, [illegible] мобилизациленĕ [illegible] Валентина Лысова 56 ĕçкунĕ, Нина Тимофеева — 45 ĕçкунĕ тунă. Кун пек примерсем татах илсе кăтартма пулать.

Çав вăхăтрах хăшпĕр районсенче шкул ачисен отрячĕсене организацилесси çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Çапла, сăмахран, çум çумланă тата утă çулнă вăхăтра шкул ачисене кашнине уйрăммăн бригадăсене янă, вĕсене ертсе пыракансем пулман. Ку çитменлĕхе пĕтерес пулать. Шкул ачисене отрядсене уйăрас пулать. Отрядсене ертсе пыма учительсене уйăрмалла. Учительсене пурне те (ялхуçалăх ĕçĕнчен хăтарнисемсĕр пуçне) отпускран каялла чĕнсе илмелле те шкул ачисемпе пĕрле тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлеме ямалла. Шкулсен директорĕсемпе учительсен вĕрентекенсен отрячĕсен ĕçне лайăх йĕркелеме тăрăшас пулать.

Ялхуçалăхĕнче ĕçлеме мобилизацилениcене ĕç вăйĕ çитменнипе кулянакан çителĕксĕр колхозсене, совхозсене тата МТС-сене ямаллине асра тытас пулать. Колхозсемпе совхозсенче мобилизациленĕ çынсем пĕрле апатланассине организацилемелле, вĕсене валли пурăнмалли çуртйĕрсем тупса памалла. Вĕсене халех туса çитерес пулать.

Ялхуçалăхĕнче ĕçлеме мобилизациленĕ ĕççыннисен кашнинех социализмлă уйхирте, авăн çапнă çĕрте тăрăшса ĕçлемелле. Вĕсен çакна асра тытас пулать: ырми-канми ĕçленипе кăна эпир Хĕрлĕ Çарпа çĕршыв валли ытларах та ытларах апат-çимĕç, промышленность валли чĕртавар пама пултарăпăр.

Д. МИТЬКОВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Хĕрле ялав çĕнĕ çĕнтерÿсем тума чĕнет

КАНАШ, июлĕн 25-мĕш. («Чăваш Коммуни» корр.). Вагонсем юсакан заводăн коллективĕ железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ ялавне илнĕскер, июнь уйăхĕнче тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе, малашне тата лайăхрах ĕçлессишĕн, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн вăйлăн кĕрешет.

Заводри нумай цехсем июлĕн малтанхи çирĕмкунлăхĕнче графика ăнăçлăн пурнăçласа пычĕç. Уйрăмах иртнĕ уйăхсенче кая юлса пынă тимĕрçĕ, йывăç касакалакан цехсем хăйсен ĕçне лайăхлатса çĕнетрĕç. Тимĕрçĕ цехĕ (цех начальникĕ Бойко, парторг Третяк тата профсоюзăн цехри комитечĕн председателĕ Сытник юлташсем) июль уйăхĕнчи плана 20 кун хушшинче 97,1 процент тултарчĕ. Ăмăртура Кукляев мастерăн смени малта пырать. ВКП(б) членĕн кандидачĕ прессовщик Козлов юлташ тăтăшах сменăра 3—3,5 норма тултарать. Тимĕрçĕ Ведь юлташ Соколов молотобоецпа пĕрле июлĕн çирĕммĕшĕнчи сменăра ĕç нормине 343 процент тултарнă.

Йывăç касакалакан цех коллективĕ те июлĕн 20-мĕш тĕлне уйăхри плана 91,6 процент тултарнă. Цех руководителĕсем — цех начальникĕ Кисляков, парторг Ревук тата профсоюзăн цехри комитечĕн председателĕ Правдивый юлташсем социализмлă ăмăртăва оперативно ертсе пыма тытăнчĕç.

Цехсенче, ĕçлекенсем çÿрекен вырăнсенче, пурне те курăнмалла тĕле кăтарту хăмисем туса çакнă. Унта сменăра лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартнă стахановецсен хушамачĕсене куллен курма пулать.

Завод управленийĕпе партбюро июнь уйăхĕнчи ĕçсен результачĕсене пăхса тухнă хыççăн, мала тухнă цехсемпе, сменăсемпе тата бригадăсемпе пĕрлех лайăх ĕçлекен рабочисене те палăртрĕç, вĕсене премисем пачĕç. Вĕсем хушшинче инструментальнăй цехри фрезеровщик Осипов, строгальщик Гимранов юлташсем пур. Гимранов юлташ, завода Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ ялавне памалла тунă ятпа пулса иртнĕ митинг хыççăн, ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ÿстерчĕ, июлĕн 20-мĕшĕнче ĕç нормине 650 процент тултарчĕ. Осипов юлташ та çав кун 4,5 норма турĕ. Строгальщик Пиульский, токарь Кореньков юлташсем те нормăна 475—500 процент тултарса ĕçлерĕç.

П. НИКОЛАЕВ.

УЙĂХРИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

Шупашкарти табак фабрикин коллективĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çак уйăхри производство планне срокчен тултарма обязательство илнĕччĕ. Июлĕн 23-мĕшĕнче коллектив çав обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ — уйăхри производство планне 104 процент тултарчĕ. Халĕ коллектив продукцие уйăхри планран ирттерсе туса кăларассишĕн ĕçлет.

Хĕрÿ ăмăртура уйрăмах Е. Овчинникова тата К. Солдатченкова юлташсен бригадисем малта пыраççĕ. Вĕсем хăйсен нормисене кулленех 120—140 процент тултараççĕ.

Фабрикăра кашни кунах социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене тăваççĕ. Мала тухнă бригадăсемпе стахановецсем çинчен пĕтĕм коллектива пĕлтереççĕ, стена хаçачĕсенче çыраççĕ.

КУЛЛЕН ИКĔ-ВИÇĔ НОРМА

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). «Большевик» заводри механически цех васкавлă задани илсен, ăна пурнăçланă çĕрте рабочисем нихăçанхинчен хастарлă та организованно ĕçлерĕç. Вĕсем ĕç пĕтмесĕр те цехран тухмарĕç.

Паллă стахановец А. Завалябин юлташ яланах нормăна 2 хут ирттерсе пурнăçа кĕртет. Юлашки заказа пурнăçланă çĕрте вăл татах та лайăхрах результатсем кăтартрĕ, нормăна 2,5 хут, уйрăм кунсенче 3—3,5 хут тултарса ĕçлерĕ.

Токарь И. Баранов юлташ кулленхи нормăна 200 процент тултарса ĕçлеме обязательство илнĕ. Вăл хăйĕн сăмахне пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртсе пырать. Июнь уйăхĕнче, вăтамран илсен, вăл ĕç тухăçлăхне икĕ хут ÿстернĕ. Июлĕн малтанхи 15 кунĕнче Баранов юлташ нормăна 250 процент таран тултарса пынă.

Çакăн пекех ĕçлеççĕ ку цехри ытти рабочисем те. Вĕсем хушшинче çурри ытла двухсотниксем, нормăна тултарса пырайманнисем пĕрре те çук.

Х. ЛИСИН.

Кашни кун—200 процент

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялĕнчи «Труд» промартельре ĕçлекенсем фронтпа çĕршыва кирлĕ япаласене ытларах туса кăларассишĕн вăйлăн кĕрешеççĕ. Вĕсем социализмлă ăмăртăва хутшăннăранпа хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Н. Семенова, В. Чубакова, М. Андреев, И. Сазонова юлташсем нормăна кулленех икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. А. Журикова работница ĕç тухăçлăхне 250 процента çитерессишĕн кĕрешет.

Рабочисем хушшинчи ăмăртăва сарнă май, артель иккĕмĕш квартал планне 153 процент тултарчĕ, виççĕмĕш кварталта та плана кашни кунах ăнăçлăн тултарса пырать. Ăмăрту кунĕсенче артельре ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕç те лайăхланчĕ.

А. РАЗИН.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă тумтирсем

Шупашкарти «Красный Кустарь» промысла артелĕнче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе Е. Васильева тата П. Климова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем июлĕн 22-мĕш тĕлне артель членĕсенчен 30 ăшă алшишш, 3 мулаххай, 270 тенкĕ укçа пухса пачĕç.

Ытти артельсен членĕсене те пирĕнтен пример илме, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсемпе япаласем пухса пама чĕнетпĕр.

Е. КОГАН.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Районри колхозсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас ĕç сарăлсах пырать. Çак кунсенче Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 14 тир, 2 килограмм çăм, алшишсем, Мăн Ямăшри «Заря» колхозра—8 тир, 7 мăшăр чăлха, 4 килограмм çăм пачĕç.

Н. ПАХОМОВ.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ВЕТЕРИНАРНЫЙ ИНСТИТУТ ИМ. Н. Э. БАУМАНА
об'являет прием студентов на 1942—43 учебный год.
Срок обучения 3 г. 5 месяцев.
Правила приема в Институт общие для всех поступающих в Ветеринарные ВУЗ'ы НКЗема СССР.
Лица, окончившие 10-летку, Рабфак и Техникум, в соответствии с этими правилами, зачисляются в число студентов Института без испытаний.
Прием заявлений до 25 августа 1942 года.
Иногородние студенты обеспечиваются жилплощадью.
Стипендии и освобождение от платы за учение—на общем основании.
Заявления о приеме в Институт подаются на имя директора Института с приложением: подробной автобиографии, аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике), трех фотокарточек и справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных). Паспорт пред'является лично при явке в Институт.
Адрес: гор. Казань, уг. ул. Б. Красной и Красина, д. № 5/8.
3—3.

ОТКРЫТ ГОСЗВЕРИНЕЦ
Демонстрируются: ягуар, барс, медведи разные, африканский и австралийский страусы, кенгуру, обезьяны, говорящие попугаи и много других зверей и птиц.

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ:
товароведы, инспектора, бухгалтер-ревизор, конюх-возчик.
Имеется столовая и хлебный ларек.
Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Кадыкова, 7, Казанская м/о база, Главснабторга.

Ют çĕршывсенче.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 22-мĕшĕнчи ирпе кăнтăрла Англин «Спитфайр» йышши истребителĕсен пысăк мар соединенийĕсем Германин оккупациленĕ территори çинчи çыранĕсене атакăланă. Бомбăсене баржăсем çине, поездсем çине, промышленность предприятийĕсем çине тата çыранри артиллери çине пăрахнă.

Англи авиацийĕ Рурпа Рейн облаçĕ çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Рурпа Рейн облаçĕнчи темиçе объект çине вĕçсе пырса тапăннă.

Истребительнăй авиаци июлĕн 23-мĕшĕнче тата июлĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противникăн оккупациленĕ территори çинчи войскисемпе артиллери позицийĕсене, чугунçулĕсене тата ытти объекчĕсене атакăланă.

Пĕлĕтсем аялтан вĕçнипе усă курса, противникăн самолечĕсем яланхинчен активлăнрах кĕрешнĕ, анчах та вĕсене вăйлăн хирĕç тăнă. Темиçе пунктра бомбăсем пăрахнă.

ЕГИПЕТРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер Египетри фронтăн пур секторĕсенче те хаяр çапăçусем пынă. Вĕсем Англи пехоти июлĕн 22-мĕшĕнче фронтăн вăтаçĕрти секторĕнче противникăн позицийĕсене атакăланă хыççăн пуçланса кайнă.

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Египетра импери войскисем хăйсен юлашки çапăçусенче йышăнса илнĕ позицийĕсене çирĕплетсе пынă. Бомбардировщиксем фронтăн вăтаçĕрти секторĕнче противникăн объекчĕсене, унăн пулемет йăвисене тата транспорт колоннисене ăнăçлăн атакăланă. Çапăçусенче противникăн 6 самолетне персе ÿкернĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕ, çĕр çинчи часемпе çыхăнса кĕрешсе, противникăн войскисене пысăк çухатусем тÿстерет. Юлашки кунсенче çĕр çинче тата сывлăшра тĕнĕл держависен 100 самолетне ытла пĕтерсе тăкнă. Египетшăн çапăçма пуçланăранпа—июнĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа—сывлăшран атакăласа противникăн автомашинисемпе лавĕсене 500-тен кая мар пĕтерсе тăкнă тата 1.500 автомашинипе лавне ытла сиенленĕ

АМЕРИКА ВОЙСКИСЕН ÇĔНĔ КОНТИНГЕНЧĔ ÇУРÇĔР ИРЛАНДИЕ ПЫНИ

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Ирландие Америка войскисен йышлă çĕнĕ контингенчĕ пырса çитнĕ.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ÇУХАТĂВĔСЕМ

ВАШИНГТОН, июлĕн 24-мĕш. (ТАСС). Çар информацин бюровĕ çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсем хăйсем вăрçă хутшăннăранпа паянхи куна çитиччен тĕрлĕ фронтсенче, çав шутра Филиппин утравĕсем çинче те, пурĕ 44.143 çын çухатнă. (Ку шута Филиппин çарĕ тÿснĕ пысăк çухатусем кĕмеççĕ, вĕсене тĕплĕн пĕлмеççĕ-ха).

Çар тÿснĕ çухатусен пысăк пайĕ вăл — нимĕн хыпарсăр çухалнисем пулса тăраççĕ. Батаан çурутравĕпе Коррегидор утравĕ çинче, Филиппин утравĕсем çинче тата Ява утравĕ çинче çав нимĕн хыпарсăр çухалнисенчен чылай пысăк пайĕ тыткăна лекнĕ пуль тесе шухăшлаççĕ

ИНДИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИНЕ ĔÇЛЕМЕ ЧАРНИНЕ ПĂРАХĂÇА КĂЛАРНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индири коммунистсен партине ĕçлеме чарнине пăрахăçлани çинчен Индипе Англире пĕр вăхăтрах деклараци пичетлесе кăларнă.

ЛАВАЛĔН ЛАКЕЙЛА ĔÇĔ ПĂЧЛАНСА ЛАРНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер Германие 350 пин француз рабочине яма ыйтнине Лаваль пурнăçа кĕртеймен. Лаваль рабочисем пухма пуçласа янă кампани намăслăн пăчланса ларнă. Темиçе кун каялла Гитлерăн уполномоченнăйĕ Заукель Лавальпе курнăçса каласнă чухне Лавале çапла каласа хăратнă: Лаваль Германие çавăн чухлĕ рабочи тупса яраймасан, Вишире çĕнĕ правительство тăваççĕ, тенĕ. Францире ĕççĕрлĕхе ÿстерсе ярас тесе, Лаваль, Берлинран хушнă тăрăх, Францири çĕршер предприятисене хупнă. Анчах та ĕççĕр юлнă рабочисем яла тараççĕ. Вĕсем, Германие каяс мар тесе, ялсенче çурматутă пурăнмалăх паекшăн та ĕçлесе тăма килĕшеççĕ.

Француз рабочийĕсем пурте гитлерла Германири предприятисенче чуралла ĕçре ĕçлеме килĕшменни Берлинри влаçсене питĕ пăшăрхантарать, вăл тата Францире хăйĕнче те лару-тăрăва çивĕчлетет.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ОККУПАЦИЛЕНĔ СОВЕТ РАЙОНĔСЕНЧЕ АЧАСЕНЧЕН МĂШКĂЛЛАНИ

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Лондонра пурăнакан норвежецсем çакăн пек хыпар илнĕ: нимĕçсем оккупациленĕ совет районĕсенчен ирĕксĕрлесе илсе кайнă çамрăксене, 8 çултан пуçласа 17 çула çитнисене, Будере (Норвегире) пулăпа консерва заводĕнче питĕ йывăр ĕçре ĕçлеттереççĕ. Çав ачасене вĕсене заложниксен шучĕпе илсе кайнă пулнă, вĕсене Норвегие яриччен темиçе уйăх хушши тĕрмере тытса усранă.

ПĔЛТЕРУ

Июлĕн 28-мĕшĕнче, каçхине 9 сехетре, Советсен Çуртĕн заседанисем тумалли залĕнче парти активĕ валли лекци пулать. Лекци темиi:

«Хальхи лару-тăру çинчен».

Лектор — Кочнев юлташ.

Билетсене парторганизацисен секретарĕсем ВКП(б) хула комитетĕнче (123-мĕш тата 127-мĕш номерлĕ пÿлĕмсенче) илмелле.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ НАРКОМЗЕМА СССР
объявляет прием студентов на 1942—43 учебный год на первый курс агрономического и зоотехнического факультетов.
Институт готовит специалистов высшей квалификации по сельскому хозяйству—агрономов и зоотехников.
В институт принимаются граждане СССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование.
Заявления о приеме подаются на имя директора по адресу: Чувашская АССР, гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 34.
Учащиеся, окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 г.г., и лица, демобилизованные из Красной Армии, принимаются в институт без испытаний.
Лица, поступающие в институт с испытаниями, держат таковые по русскому языку и литературе, физике и химии.
Заявления о поступлении в институт принимаются до 1-го сентября 1942 года.
С 1 августа при институте будут работать подготовительные курсы.
Курсанты и студенты обеспечиваются общежитием и столовой.
3—2. ДИРЕКЦИЯ.

ЦИВИЛЬСКАЯ ФЕЛЬДШЕРСКАЯ ШКОЛА НКЗ ЧУВАШСКОЙ АССР
об'являет прием учащихся на 1942—43 учебный год
НА ФЕЛЬДШЕРСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ.
В школу принимаются граждане в возрасте от 15 до 35 лет с образованием не ниже семи лет.
Поступающие принимаются без испытаний.
Прием заявлений с 1 июня по 15 августа.
Зачисление в число учащихся производится с 20 по 25 августа.
Начало занятий с 1 сентября.
Заявления подаются на имя директора фельдшерской школы с приложением следующих документов: свидетельства об образовании, свидетельства о рождении, справки о состоянии здоровья, трех заверенных фотокарточек. Паспорт предъявляется лично.
Стипендия назначается отличникам семилетки и инвалидам отечественной войны.
Принятые в школу обеспечиваются общежитием.
Для ответа к документам должна быть приложена марка в 30 копеек.
Адрес: гор. Цивильск, Б.-Советская, 64, Фельдшерская школа.
3—2 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 883 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.